Пурнăçа, çĕршыва юрат, тăван халăх мĕнпе чĕрĕ, çавна юрат!

# ТУСЛĂХ

НУРЛАТ РАЙОНĔН ОБЩЕСТВĂПА ПОЛИТИКА ХАÇАЧĔ
ОБЩЕСТВЕННО-ПОЛИТИЧЕСКАЯ ГАЗЕТА НУРЛАТСКОГО РАЙОНА

*Хаçат 1931 çулхи июлĕн 9-мĕшĕнче тухма пуçланă.* N 64 (4633) *1998 çулхи июнь (çĕртме) уйăхĕн 5-мĕшĕ, эрнекун* *Палăртнă хакпа.*

## Пирĕн районта "Сувара" вулакансен хисепĕ ӳсĕ

Кăçал август уйăхĕнче республикăри чăвашсен обществăпа политика "Сувар" хаçачĕ çутă курнăранпа пилĕк çул çитет. Ялсемпе хулара пурăнакансен пурнăçне тата ĕçне активлă тимлĕх уйăракан, чăваш халăхĕн кулленхи ĕçĕсем, йăла ыйтăвĕсем, кану çинчен куллен статьясемпе корреспонденцисем пичетлекен çак издание хулапа районта пурăнакансем лайăх пĕлеççĕ. Нумаях пулмасть администраци пуçлăхĕ Ф.С.Сибагатуллин хушнипе Аслă Отечественнăй вăрçа хутшăннисене "Сувар" хаçата çырăнтарма районти социаллă тивĕçтерӳ пайне укçа уйăрнă. Çапла майпа хаçат вулакансен шучĕ ӳсĕ.

## Ĕçне кура хисепĕ



***Ĕçченлĕхе, йĕркелĕхе, тирпейлĕхе Иван ашшĕ-амăшĕнчен вĕреннĕ. Унăн ашшĕ платник ăстаçă пулнипе, ĕçе тĕплĕ пурнăçланипе тата тĕрĕслĕхе юратнипе палăрса тăнă. Çакна шута илсе, ăна Синдряков ячĕпе хисепленекен ассоциацин ревизи комиссийĕн председателĕ пулма суйланă. Халь те Илья Николаевич хуçалăха йĕркеллĕ тытса пырассишĕн, пĕрлехи пурлăха тирпейлĕ упрассишĕн тăрăшать.***

***Иван та, çакăн пек çемьере ӳснĕскер, хăй тĕллĕн пурăнма тытăнсан та çемье принципĕсемпе йăли-йĕркисене çирĕп тытать. Арăмĕпе - участок больницин медсестрипе Зойăпа пĕрле вĕсем ывăлпа хĕр ӳстереççĕ, вĕсене те ĕçчен те аслисене сума суччĕр тесе вĕрентме тăрăшаççĕ. Ашшĕ-амăшне ял çыннисем тивĕçлипе хисепленине ачисем кураççĕ. Çапла, вĕсен ашшĕ çураки тапхăрĕнче иртен тытăнса каçчен хирте вăй хунă, акакан агрегатсем кал-кал ĕçлеччĕр тесе вăрлăхпа вăхăтлă тивĕçтернĕ. Хуçалăхра акана вăхăтлă ирттернинче, паллах, Иван Ильич Савадеровăн вăйĕ те пур.***

***Ӳкерчĕкре: Синдряков ячĕпе хисепленекен ассоциаци шоферĕ И.И.Савадеров.***

## Вăл Амзяна та, Селенкĕше те çитрĕ

### Ялсене – газ

**Çак ялсенче пурăнакансем, район центрĕнчен инçе вырнаçнăскерсем, хăйсем патне çутçанталăк газĕ çитессе шанман та. Селенкĕшре пурăнакансем хăйсем патне йышăну комиссийĕ пырса çитсен те çакна шанмарĕç-ха, анчах та пуçланă ĕçе вĕçне çитереççех ĕнтĕ.**

Район ертӳçисем газификацие пысăк тимлĕх уйăрни, подрядчиксем çине тăрса ĕçлени, çаплах заказчиксем вĕсем валли условисем тума тăрăшни результатсăр пулмарĕ. Сăмах "Газпромстройăн" Нурлатри участокĕн (Г.Н.Бикинеев) тата "Востокмонтажгазăн" 2-мĕш СУ (Е.В.Минжаев) газовикĕсем çинчен пырать. Вĕсем çак ялсене газ кĕртеççĕ: газ пайлакан пунктсене оборудованиленĕ, ялсенчи газопроводсене тунă тата çуртсене пăрăхсем хывнă. Пĕлтĕр кĕркунне кăна "Комбайн" хуçалăх председателĕ пулса ĕçлеме тытăннă Дамир Фассаховăн тӳпине те палăртса хăвармасăр юрамасть. Ытти ĕçсем те чылай пулнине пăхмасăр, вăл çак ыйтăва пысăк тимлĕх уйăрнипе ялта пурăнакансен ĕмĕчĕсем пурнăçланнă. Ытларикун Кивĕ Амзяпа Селенкĕш ялĕсенчи пĕрремĕш çуртсенче сенкер çутă çуталса кайнă. "Нурлатгаз" эксплуатаципе производство управленийĕнчи Сергей Калыгин, Владимир Мандрейкин, Александр Молчанов газовиксем тата ыттисем ГРП майласа газ ярас тата ытти чылай ĕçсене пурнăçлас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçленипе патшалăх комиссийĕ газ яма ирĕк панă. Çак ялсене газопровод линийĕсем тăснă 4-мĕш номерлĕ МУ рабочийĕсем ырми-канми ĕçĕ çинчен эпир хаçатра çырнăччĕ ĕнтĕ.

Пĕрремĕш çуртсенче çунма пуçланă сенкер çулăм çынсен шанчăкне тата та çирĕплетĕ, хуларан инçе вырнаçнă çак ялсенче пурăнакансем те тахçантанпа кĕтнĕ ырлăха кĕтсе илчĕç, газ кĕртес текенсен (урăхла каласан, кирлĕ суммăна тӳлеме хатĕррисем) шучĕ тата та ӳсĕ тесе шутлатпăр. Çак ĕçсене пысăк хăвăртлăхпа пурнăçлама газовиксен вăйĕ те, майĕсем те пур. Тĕслĕхрен, Селенкĕшре çитес çывăх вăхăтра 150 çемьене газ кĕртме май пур.

**Июнĕн 5-мĕшĕ - Пĕтĕм тĕнчери тавралăха сыхламалли кун**

## С.Ахмадеева: "Эпир - çĕрĕн пĕр пайĕ, çĕр - пирĕн пĕр пай"

***Экологсен шухăшĕпе, кăнтăр-хĕвелтухăç регионĕ республикăра чи вараланнисенчен пĕри шутланать. Атмосферăна стационарлă, куçармалли çăлкуçсенчен вараланакан веществосем, каяшсене палăртман вырăнсенче вырнаçтарни, предприяти территорийĕсенче автотранспорт çунипе тасамарлăх шыва е вырăнти рельефа кайни - кусем пурте тавралăха вараланакан факторсем.***

***Акă пилĕк çул ĕнтĕ районта экологи фончĕ ĕçлет. Çак вăхăтра вăл районшăн мĕнле усăллă ĕçсем тунă-ха? Кун çинчен пирĕн корреспондента Нурлат районĕнчи экологи фончĕн ертсе пыракан специалисчĕ Сания Ахмадеева каласа парать.***

- Тĕллевлĕ экологи проекчĕсемпе программăсене финансласси, патшалăх предприятийĕсемпе организацийĕсене çутçанталăка сыхлас тĕлĕшпе пулăшу парасси правительство пире шанса панă задача шутланать. Кашни çул районта çутçанталăка сыхламалли мероприятисене экологи фондне пуçтарăннă укçатенкĕн 50 проценчĕ каять. Тĕрлĕ çулсенче ку тĕрлĕ сумма. Тĕслĕхрен, 1997 çулта пирĕн районти экологи фончĕ 1 миллион та 300 пин тенкĕ (çĕнĕ укçапа) пуçтарнă пулсан, тĕрлĕ мероприятисене пурнăçлама 3 миллион тенкĕ уйăрмалла. Çав шутра хирти Мамăк-Нурлат водовод, ашпа-шăмă çăнăхĕ туса кăларакан цеха хăпартма пысăк сумма янă. Çаплах йăлари хытă каяшсене тăкмалли полигон строительствине, экологи преподавателĕсен семинарне ирттерессине эпир финанслarăмăр.

Кăçал та эпир çутçанталăка сыхламалли мероприятисем валли çакăн чухлех укçатенкĕ уйăрасшăн. Йăлари каяшсен полигонĕ валли те иртнĕ çулхи чухлех укçа уйăрма планлатпăр. Кивĕ Чаллăри сысна самăртакан комплексăн тасатакан сооруженийĕсен проектпа шырав ĕçĕсене финансласшăн, çаплах çăлкуçсене тасатса тирпей-илем кĕртессине те тимлĕхре тытăпăр.

Предприятисемпе организацисен тавралăха сыхлас тĕлĕшпе пĕлтерне интереслĕ шухăшĕсене эпир хапăлласах йышăнатпăр. Тĕслĕхрен, районти вăрман хуçалăхĕ юманлăхсем ӳстерес ĕçе малалла тăсма йышăнчĕ, паллах ĕнтĕ, эпир ку ĕçрен аяккинче тăрса юлмăпăр.

Çаплах эпир ачаран экологи тĕлĕшпе воспитани парассине тимлĕхре тытатпăр. Тутарстан Республикин Министрсен Кабинечĕ апрель уйăхĕнче йышăннă постановленийĕпе килĕшӳллĕн ачасен канăвне, сиплессине тата пушă вăхăтне усăллă ирттерессине йĕркелессине эпир активлă хутшăнăпăр. Районти вĕрентӳ пайĕ çуллахи каникул тапхăрне планланă экскурси проекчĕсене финанслатпăр.

Июнĕн 5-мĕшĕнче общественность Пĕтĕм тĕнчери тавралăха сыхламалли куна палăртать. Экологи ларутăрăвне лайăхлатасси пирĕн ĕçре чи кирли. Пирĕн сывлăх тата генфонда сыхласа хăварасси шăпах çавăнтан килет.

Çутçанталăка - сывлăша, шыва, тăпрана сыхламасан эпир хамăр хальхи тата малашнехи пурнăçа чухăнлатăпăр. Экологи ыйтăвĕсем пиртен кашнине хумхантармалла.



Майпа усă курса, эпĕ хамран тата Тутарстан Республикин экологи фончĕн кăнтăр-хĕвелтухăç представительствин директорĕн А.А.Латфуллинан ятĕнчен çутçанталăкпа усă куракансене те çак кун ячĕпе саламлатăп. Пурне те çирĕп сывлăх, таса шывпа усă сывлăш сунатăп.

**Ф.ЗИЯТДИНОВА калаçнă.**

*Улах юррисем*

## Сад янтрарĕ сар кайăк сассипе

Манăнах алăра ылтăн сулă,
Улпут валли ыйтаç парнене.
Хамăр эпир начар пулсассăн та,
Тăвансем йыхăраç хăнана.

Кĕмĕл çĕрĕ пулĕ, пысăк пулмĕ,
Йĕс çĕрĕ хушшинче хур пулмĕ.
Пирĕн тăван пулĕ, пысăк пулмĕ,
Çичĕ ют хушшинче хур пулмĕ.

Çӳлĕ тусем çинче пĕр пусă,
Пăяв ярса пăяв çитес çук.
Пирĕн çак тăвансем пит аякра,
Салам ярса салам çитес çук.

Улпучĕ тухаймасть улăхĕнчен,
Улăх улмисене ытарса.
Эпир тухаймастпăр çакă ялтан,
Çак ялăн çĕршывне ытарса.

Сад янтрарĕ сар кайăк сассипе,
Чун савăнчĕ сире курнипе.

Пухса йĕркелекенĕ
Е.ИЛЮШКИНА.



С.Майстер фотоэтючĕ.

# Спортра та, вĕренӳре те лайăххисем

Пирĕн районти шкулсенче вĕренекенсем хушшинче шахматла тата шашкăлла вылясси йăлана кĕрсе пырать. Массăллă ăмăртусем ăнăçлă иртеççĕ, ачасемпе çамрăксен клубĕнчи шахмат-шашка секците пысăк та усăллă ĕç пурнăçлать. Эпир шахмат-шашка вăййисемпе ачасене культура енчен воспитани парассинче усă куратпăр. Шахмат-шашка юратакансем ăслă-тăнлă шухăшлама вĕренеççĕ. Çакна эпир практикăри ĕçпе çирĕплететпĕр. Пирĕн çамрăк шахматистсен команди Тутарстан Республикинчи шкулта вĕренекенсен II Спартакиадине хутшăнчĕç, вăл Лениногорск хулинче иртрĕ. Районти шкулсем хушшинче уйрăм тата командăпа мала тухас тĕлĕшпе турнир иртрĕ. Халь тренерсен совечĕпе вĕренӳ çулĕн итогĕсене пĕтĕмлететпĕр.

Шахмат секцине - 26, шашка секцине 52 ача çӳрерĕ. Ленар Ишмухаметовпа Андрей Захаров шахматистсем лайăх вĕренчĕç. Вĕсем иккĕшĕ те 1-мĕш номерлĕ шкултан, çаплах 4-мĕш номерлĕ шкулти Фарид Садыков та хăйне лайăх енчен кăна кăтартрĕ. Шашистсем хушшинче Сергей Маликов, Динар Ахметвалеев Сергей Стручков тата ыттисем палăрчĕç. Асăннисем виççĕшĕ те 4-мĕш номерлĕ шкултан. Июнĕн 1-мĕшĕнчен çуллахи каникул пуçланчĕ. ДЮКФП çумĕнче РОО пионер лагерĕ йĕркелĕ. Кашни смена 10-шар кун канĕ. Ачасемпе экскурсисем, культпоходсем тата ытти илĕртӳллĕ мероприятисем йĕркелĕç.

Ашшĕ-амăшĕсем хăйсен ачисен канăвне йĕркелес тесе тăрăшасса шанатпăр, эпир вара вĕсене кăмăлпах йышăнăпăр.

**А.КОСТИН,**
**тренер-преподаватель.**



## “Сервистехинвест” СИФПăн 1997 çулхи финанс результачĕсем çинчен отчет

| Тупăшсем | пин тенкĕ |
| --- | --- |
| 1. Таварсемпе продукци сутнипе, ĕçсемпе услугăсем тунипе илнĕ тупăшсем | 2707217 |
| 2. Ытти тупăшсем | 44818 |
| Тупăшсем пурĕ | 2752035 |
| **Тăкаксем** | |
| 1. Коммерципе управлени тăкакĕсем | 425822 |
| 2. Таварсемпе продукци сутнин, ĕçсемпе услугăсем тунин хăйхаклăхĕ | 1659314 |
| 3. Ытти тăкаксем | 449440 |
| Тăкаксем пурĕ | 2534576 |
| **Тупăш** | 217459 |

**Фонд управляющийĕ Э.Х.Камалова**
**Тĕп бухгалтер А.Х.Нотфуллина**

Тĕрĕссине “Аудит-Сансанар” ООО аудитор фирми çирĕплетнĕ.

## “Сервистехинвест” СИФПăн балансĕ 1998 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне

**Адрес: 423000 ТР Нурлат хули, К.Маркс урамĕ, 12-мĕш номерлĕ çурт**

| Актив | пин тенкĕ |
| --- | --- |
| 1. Вăрăм срока хывнă укçа-тенкĕ | 8629129 |
| 2. Уйрăлса тухнă тата пăхăнса тăракан обществăсен парăмĕ | 122411 |
| 3. Дебитор парăмĕ | 19082 |
| 4. Кĕске срока хывнă укçа-тенкĕ | 21892 |
| Пурĕ | 8792514 |
| **Пассив** | |
| 1. Уставной капитал | 10000000 |
| 2. Хушса панă капитал | 7791089 |
| 3. Кредитор парăмĕ | 1425 |
| Пурĕ | 8792514 |

**Фонд управляющийĕ Э.Х.Камалова**
**Тĕп бухгалтер А.Х.Нотфуллина**

*(Лицензи номерĕ - 010451 РФ МФ ЦАЛАК 1997 çулхи июнĕн 4-мĕшĕнче панă, 1998 çулхи майăн 29-мĕшĕччен вăйра).*

# Пĕлтерӳсем

*Апат-çимĕç комбиначĕ патĕнчи гараж сутăнать. Адрес: Гагарин урамĕ, 5-10.*

* * *

*1995 çулта туса кăларнă ВАЗ-21093 сутăнать, 30 пин тенкĕ, калаçса татăлма пулать. Телефон: 2-16-11.*

* * *

*“ИЖ-Планета 5” мотоцикл - 3000 тенкĕ, топливозаправщик (9,6 кубла метр) - 170000 тенкĕ сутатпăр. Телефон: 42-20-80, Çыранçи Чаллă.*

* * *

*Çĕнĕ караслă, тăвата корпуслă çĕнĕ вĕллесем сутатпăр. Адрес: Советская урамĕ, 29, телефон: 5-12-71, 17 сехет хыççăн шăнкăравламалла.*

* * *

*“Западный” микрорайонта туса пĕтермен çурт сутăнать. Адрес: Кăрмăш поселокĕ, Дружба урамĕ, 14.*

* * *

*Ленин урамĕнчи капиталлă гараж сутăнать (аптека патĕнче). Адрес: Карбышев урамĕ, 60-1.*

* * *

*Çемçе сĕтел-пукан юсатпăр. Телефон: 5-19-80.*

* * *

*Пĕчĕк çемье пурăнмалли хваттер тата пĕр пӳлĕмлĕ хваттер сутăн илетĕп. ВАЗ-2121 “Нива”, ВАЗ-2108, МАЗ-500, хула варринчи икĕ пӳлĕмлĕ хваттере сутатăп. Тĕрлĕ майсем пулма пултараççĕ. Телефон: 5-25-35.*

* * *

*Икĕ пӳлĕмлĕ хваттер сутăнать. Адрес: Школьная урамĕ, 84.*

* * *

*Полевая урамĕнчи 11-мĕш номерлĕ çурт сутăнать. Телефон: 5-20-74.*

* * *

*9 х 9 метрлă хыр пура, 10 метрлă хыр пĕренесем 40 штук сутатпăр, хакĕ калаçса татăлнă тăрăх. Апат-çимĕç пасарĕнчи Миннигель Юсуповаран ыйтса пĕлмелле.*

* * *

*Тури Нурлат ялĕнчи лайăх шайри çурта сӳтме сутатпăр. Минигали Сиразетдиновран ыйтса пĕлмелле.*

* * *

*ВАЗ-21063 сутатпăр, двигателĕ 1997 çулхи, хаклă мар, 9 пин тенкĕ. Хиртикӳл ялĕнчи Халил Аглиуллинран ыйтса пĕлмелле. Телефон: 2-33-25.*

* * *

*Çурта вутăлăх сӳтме сутатпăр. Адрес: Кутузов урамĕ, 25.*

* * *

*Советская урамĕнчи 189-мĕш номерлĕ çуртра пĕр пӳлĕмлĕ хваттер сутăнать. Дружба урамĕнчи 76-мĕш çуртри 42-мĕш хваттерте 17.00 сехет хыççăн е 65-5-11 номерлĕ телефонпа ыйтса пĕлмелле.*

* * *

*Хула варринчи 2 хутлă çуртра 1-мĕш хутри виçĕ пӳлĕмлĕ хваттер сутăнать. 2-12-50 номерлĕ телефонпа 17.00 сехет хыççăн ыйтмалла.*

* * *

*547-мĕш ПМК территорийĕнче "Карина" магазин уçăлнă. Пурне те пырса курма сĕнетпĕр.*

* * *

*Советская урамĕнчи 49-мĕш çуртри 1-мĕш хваттер сутăнать. Тĕрлĕ майсем пулма пултараççĕ. Телефон: 2-24-58.*

*Предприяти 30 сантиметр тăршĕллĕ чăнчăн çӳç хаклă хакпа сутăн илет. Çӳçе пĕр кун кăна - июнĕн 16-мĕшĕнче 9.00 сехетрен пуçласа 17.00 сехетчен Йăла çурчĕн парикмахерскийĕнче çак адреспа йышăнаççĕ: Школьная урамĕ 22-мĕш çурт . Лицензи АВ, номерĕ - 01558610.*

Тĕп редактор Р.Ф.ЗАМАЛЕЕВ.

Редактор Т.И.БУРАЙКИНА.

Учредительсем: Нурлат районĕн администрацийĕпе редакцин ĕç коллективĕ

Хаçат эрнере виçĕ хутчен - юнкун, эрнекун, шăматкун тухать, вырăсла тата чăвашла тухать.

ПИРĔН АДРЕС: 423000, Нурлат хули, Карл Маркс урамĕ, 19.

ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор - 2-12-14, 2-22-81, редактор заместителĕ тата советсемпе обществăлла организацисен пурнăçĕн пайĕ - 2-10-44, редактор заместителĕ, яваплă секретарь - 2-18-67, редакторăн вырăс дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-14-16, редакторăн чăваш дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-10-44, ялхуçалăх пайĕ, промышленность, çырусемпе массăлла ĕç пайĕ - 2-22-51, бухгалтери, реклама пайĕ тата фотокорреспондент - 2-15-63.

Хаçата Тутар Республикин Информаципе пичет министерствинче шута илнĕ.

Регистрациленĕ номерĕ 34.

Димитровградская типография управления печати и информации Ульяновской области. Печать офсетная. Объем -1 печатный лист. Тираж 860.